# Республика кунĕпе саламлатпăр!

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм мăшă

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

24(946) №, 2016, çĕртме/июнь, 25

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

●Кишĕр симĕсленесрен... Юн пусăмĕ чаксан 8 стр.

●Упăшкана юрас тесе... Арăм патне... улаха 9 стр.

●Эстрада çăлтăрĕ хăй пуранакан ял ятне улăштарасшăн 11 стр.

## САЛАМ

**Хаклă ентешĕмĕрсем!**
**Сире Республика кунĕ ячĕпе пĕтĕм чунтан саламлатăп!**

Пире чăннипех те тивлетлĕ çĕршывра – анлă Атăл мăнаçлăн юхса иртекен, 128 наци çыннисемшĕн тата 8 халăх ушкăнĕшĕн тăван кил шутланакан тăрăхра – ĕçлеме тата пурăнма телей пӳрнĕ.

Чăваш Ен халăхĕн ĕçченлĕхĕ республика тулашĕнче те мухтава тивĕçнĕ. Вăл кăткăс тĕллевсене татса парас шутпа пĕрлешме пултарни, пĕр-пĕрне пулăшни тата йăла-йĕркене çирĕп тытса пыни Чăваш Республикин кал-кал аталанăвĕн никĕсĕ пулса тăчĕ.

Пĕрле эпир чылай ĕç пурнăçларăмăр. Хуласемпе ялсем илемленеççĕ, инфратытăм аталанать – çĕнĕ çулсем хута каяççĕ, ку чухнехи ача сачĕсемпе шкулсем, спорт тата медицина объекчĕсем, пурăнмалли çуртсем çĕкленеççĕ, çĕнĕ производствăсемпе предприятисем, туризмпа сервис индустрийĕн объекчĕсем уçăлаççĕ.

Пĕлтĕр Чăваш Ене ачасемшĕн пурăнма чи лайăх майсем туса панă Раççей регионĕсенчен пĕри тесе йышăннă.

Республика Раççей Федерацийĕн чи инновациллĕ пилĕк субъекчĕ шутне кĕчĕ.

Чăваш Ен çĕр ĕçченĕсем производствăра инновациллĕ технологисемпе усă кураççĕ. Хресченсен тухăçлă ĕçĕ республикăра пурăнакансене ял хуçалăхĕн паха продукцийĕпе тата апат-çимĕç продукчĕсемпе туллин тивĕçтерме май парать.

Социаллă политикăна тĕллевлĕн пурнăçласа пынине, экологи лару-тăрăвне йĕркеленине, наци сывлăхне çирĕплетнине пула демографи лару-тăрăвĕ лайăхланать, вăрăм ĕмĕрлĕ çынсен шучĕ, нумай ачаллă çемьесен йышĕ ӳсет.

Эпир çамрăк ăрăва хамăр халăхра йăлана кĕнĕ çемье хаклăхĕсене тĕпе хурса пăхса çитĕнтеретпĕр, аслă ăру çыннисемпе хальхи вăхăтри ĕçченсене хисеплеме вĕрентетпĕр.

2016 çула Чăваш Енре Ĕç çыннин çулталăкĕ тесе йышăннă. Этем аталанăвне инвестицисем хывни, кашни çынна хăйĕн пултарулăхĕпе туллин усă курма майсем туса пани пирĕн пĕрлехи çитĕнӳсен никĕсне йĕркелеççĕ.

Эпир паян пирĕн регион тулли вăй-хăватлă тата ырă малашлăхлă тесе çирĕплетсех калама пултаратпăр. Хальхи Чăваш Ен – çĕр пин мехелпе палăрса тăракан сумлă çĕршыв, малашлăха ăнтăлакан, пысăк пĕлтерĕшлĕ плансене шанчăклăн пурнăçа кĕртекен регион.

Республикăра пурăнакансене тăван çĕре чăннипех юратнăшăн чĕререн тав тăватăп!

Пĕтĕм чунтан çирĕп сывлăх, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил ИГНАТЬЕВ.**

## Çанталлăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 25.06 | +23 | +18 |
| 26.06 | +24 | +16 |
| 27.06 | +23 | +19 |
| 28.06 | +22 | +15 |
| 29.06 | +24 | +15 |
| 30.06 | +25 | +16 |
| 01.07 | +26 | +19 |



Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕ.

4 стр.

# Элĕксем ĕçлеме те, савăнма та пĕлеççĕ

**Республика кунне ирттермешкĕн кăçал Элĕксем тивĕç пулчĕç. Паллах, хăйсен ырă ĕçĕсемпе тата çитĕнĕвĕсемпе çĕнсе илчĕç çак чыса. Хăнасене йышăнмашкăн тĕплĕн хатĕрленчĕç: салана хăтлăх, тирпей-илем кĕртрĕç. Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче вара аслă Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килсе çитнĕ вун-вун хăнана çăкăр-тăварпа ăшпиллĕн кĕтсе илчĕç.**

Кăçалхи уяв Йăлкăшсен асĕнче чылайччен упранĕ: Чăваш Ен ертӳлĕхĕ паллă кун ячĕпе вĕсене парнепе савăнтарчĕ, кунта фельдшерпа акушер пункчĕн çĕнĕ çурчĕ çĕкленчĕ. Çакăнпа ватти-вĕтти те, вăйпитти те кăмăллă.

ФАП ертӳçи Альбина Борисова палăртнă тăрăх – кунта çывăхри 5 ялта пурăнакан 904 çыннăн, çав шутра 18 çула çитмен 147 çамрăкăн тата çулталăк тултарман 4 пепкен, сывлăхĕшĕн тăрăшаççĕ.

Район больницин тĕп тухтăрĕ Василиса Архипова пĕлтернĕ тăрăх – ФАП строительстви валли республика бюджетĕнчен 2 миллион тенке яхăн, район хыснинчен 300 пин уйăрнă. Тĕрĕссипе, ăна вăхăтра хута ямашкăн строительсемпе пĕрле ял çыннисем те сахал мар тăрăшнă: субботниксем ирттерсе тавралăха тирпей-илем кĕртнĕ. Вĕсене, сăмахран, Виталий Леонтьев пенсионер та хастар хутшăннă. «Пурте ĕçлерĕмĕр, халĕ пĕрле савăнатпăр, – тет вăл. – Юмахри пек çурт ӳссе ларчĕ вĕт».

### Кулибинран та, артистран та кая мар…

Ун хыççăн республика Пуçлăхĕ салари Совет Союзĕн Геройĕ М.Ефимов ячĕллĕ лапамра йĕркеленĕ харпăр хăй техникин «21 ĕмĕрти Кулибин» тата ача-пăча пултарулăхĕн «Модельсен тĕнчи» конкурс фестивальне çитсе курчĕ. Тĕлĕнмелли, чуна тыткăнлаканни сахал мар пулчĕ кунта. Уява пухăннисем паянхи ăстасем Кулибинран кая маррине курса ĕненчĕç. Тĕрлĕ районти шкулсенчен килнĕ çамрăк ăстаçăсем робот техникипе паллаштарчĕç. Çитĕннисем, чун туртăмне трактор-машинăра тупнисем, тĕпрен илсен, Шупашкарти трактор завочĕн музейĕн хастарĕсем, хăйсем ăсталанă е çĕнетсе улăштарнă ял хуçалăх техникине – туртăм вăйлине, сухалакан-акаканнине, çулакан-кăпкалатаканнине, пухса кĕртеkеннине – халăх умне кăларчĕç.

# Олимпиадăра ăмăртасси – кашни спортсменăн ӗмӗчӗ

## Раҫҫей атлечӗсем Рио-де-Жанейрона каяс тӗллевлӗ






**Шупашкарти «Олимпийский» стадион ҫăмăл атлетсен Раҫҫей чемпионатне пиллӗкмӗш хут йышăнать пулин те кăҫалхи ăмăрту хăйнеевӗрлӗхпе палăрса тăчӗ. Раҫҫей спортсменӗсене хирӗҫле «кампани» пуҫарни те атлетсен кăмăл-туйăмне пăсрӗ. Тен, ҫавăнпа хăшӗ-пӗри хăйӗн кăтартăвӗсене лайăхлатас тӗллевпе ҫине тăмарӗ курăнать. Пурпӗр чемпионатра хӗрӳ тупăшусемпе ҫивӗч финалсем, пысăк ҫитӗнӳпе кӗтменлӗх сахал мар пулчӗҫ. Кашни ăмăртура чи пултаруллисем вăй виҫрӗҫ. Старта ҫамрăк спортсменсем те, Олимп чемпионӗсем те, тӗнче тата Европа турнирӗсенче палăрнисем те тухрӗҫ. Вӗсен йышӗнче 2015 ҫулта Чăваш Ен тӗп хулинче иртнӗ командăсен Европа чемпионачӗн паттăрӗсене те куртăмăр.**







### Екатерина Ишова – виҫҫӗмӗш

Чи малтан кӗрешӗве 100 метра парăнтаракансем тухрӗҫ. Ку ăмăртура ҫамрăк спринтер, юниорсен чемпионачӗн призерӗ Анна Сивкова ҫӗнтерчӗ. Пӗлтӗрхи чемпионка Анна Кукушкина /Мускав/ виҫҫӗмӗш пулчӗ. Арҫынсенчен ҫак дистанцире Денис Огаркова ҫитекенни пулмарӗ.

Чăваш Ен спортсменӗсем те савăнтарчӗҫ. Стайерсен турнирӗнче Вăрнар хӗрӗ Екатерина Ишова /Горбунова/ бронза медаль ҫӗнсе илчӗ. «Ку медаль маншăн «ылтăнпа» танах: Раҫҫей чемпионатӗнче эпӗ пӗрремӗш хут наградăллă пултăм. Ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума вăй-хал парать», – терӗ Универсиада призерӗ. Унăн кăтартăвӗ – 15 минут та 55,03 ҫеккунт. Сăмах май, вăл 1500 метрлă дистанцисенче сахал мар палăрнă. Ку хутӗнче 5000 метрлă дистанцие вара Европа чемпионачӗн маттурӗ Елена Коробкина чи малтан вӗҫлерӗ, ун хыҫҫăн пушкăрт хӗрӗ Гульшат Фазлитдинова ҫитрӗ. Арҫынсен чупăвӗнче ҫӗнтӗрӳҫӗ ятне Владимир Никитин тивӗҫрӗ.



### Еленăпа Анжеликăн тупăшăвӗ

Иккӗмӗш кун стадиона пухăннисем шăчăпа сикекенсен секторӗнчен куҫ илмерӗҫ. Епле-ха унсăрăн: Чăваш Ен стадионӗнче тӗнчипе паллă атлет, Олимп вăйăйисен икӗ хут чемпионки, тӗнче рекордне 28 /!/ хут ҫӗнетнӗ Елена Исинбаева хăйӗн ăсталăхӗпе тӗлӗнтерчӗ. Унпа Европа чемпионки Анжелика Сидорова тупăшрӗ. Тӳрех каламалла, Сидорова Исинбаевăна ҫитеймерӗ: Елена 4,90 метр сиксе ҫӗршыв чемпионкин ятне тивӗҫрӗ. Спортсменка 5,07 метр сиксе тӗнче рекордне ҫӗнетес тӗллевлӗччӗ, анчах хальлӗхе пулмарӗ. Унăн чи пысăк кăтартăвӗ – 5,06 м /2009 ҫул, Цюрих, «Ылтăн лига» ăмăртура/.

Чăваш Ен спортсменки Анжелика Сидорова вара иккӗмӗш вырăн йышăнчӗ, хăйӗн кăтартăвне лайăхлатрӗ – 4,85 м. Иртнӗ ҫул вăл ăмăртура 4,50 метр сиксе ҫӗнтернӗччӗ.

– Паян эпӗ питӗ телейлӗ ҫын. Пӗрремӗшӗнчен, хамăн кăтартăва ҫӗнетрӗм, иккӗмӗшӗнчен, тӗнчери чи вăйлă спортсменкăпа кӗрешме май килчӗ. Ҫамрăк чухне эпӗ Елена Исинбаева пек пулас тесе тăрăшаттăм, вăл епле сикнине пăхса тӗлӗнеттӗм. Акă паян унпа пӗр старта тухма май килчӗ. Ку маншăн питӗ пысăк чыс. Малашлăх пирки калас-тăк, кашни спортсменăн паян пӗр тӗллев – Олимпиадăна хутшăнасси, – савăк кăмăлне пытармарӗ 2014 ҫулхи тӗнче чемпионачӗн кӗмӗл призерӗ.

### Шубенковпа Ухов – чемпионсем

Арҫынсен хушшинчи кӗрешӳсене те сăнама кăсăклă пулчӗ. Тӗслӗхрен, барьерсем урлă 110 метра чупакансен тупăшăвӗнче Сергей Шубенков ҫӗнтересси пирки никамăн та иккӗленӳ пулмарӗ. «Малтанхи кăтарту кăшт япăхрахчӗ манăн, ҫавăнпа хумханнăччӗ те. Финалта кăтарту лайăхланни кăмăла ҫӗклерӗ. ИААФ йышăнăвӗ савăнтармарӗ пулин те шанăҫа ҫухатмастăп-ха. Доклада вуласа тухрăм та – пирӗншӗн пит начарриех ҫук иккен унта. Вӗсем пирӗн ҫунатсене хуҫасшăн кăна. Пӗтӗм тӗнчери Олимп комитечӗн сăмахӗ витӗмлӗрех пуласса кӗтетӗп. Ырри усала ҫӗнтеретех», – яланхи пекех хаваслă йăл кулă ҫиҫрӗ спортсмен питӗнче. Барьеристсен ăмăртăвӗнче пьедестал ҫине иртнӗ ҫулхи пекех Константинпа Филипп Шабановсем /пиччӗшӗпе шăллӗ/ хăпарчӗҫ. Хӗрсен ушкăнӗнче Олимп нормативне унччен пурнăҫланă Екатерина Галицкая мала тухрӗ.

Ҫӳллӗшне сикекенсен секторӗнче вара Олимп чемпионӗ Иван Ухов, тӗнче чемпионӗ Даниил Цыплаков тата Олимп вăйăйисен призерӗ Андрей Сильнов вăй виҫрӗҫ. 2015 ҫулта ҫӗршыв чемпионатӗнче иккӗмӗш кăтартупа палăрнă Иван Ухов ку хутӗнче ҫӗнтерчӗ пулин те савăнăҫлă марччӗ: те 2,30 метра тăваттăмӗш хутӗнчен кăна парăнтарни, те ИААФ йышăнăвӗ унăн кăмăлне пăснă – журналистсемпе калаҫма кăмăл пулмарӗ унăн. Арҫынсен кӗрешӗвӗнче вара тӗлӗнмелли сахал мар пулчӗ. А.Сильнов тем чухлӗ тăрăшрӗ пулин те пьедестал ҫине хăпараймарӗ, Д.Цыплаков вара виҫҫӗмӗш вырăнпа ҫырлахрӗ. Олимп чемпионӗпе ҫамрăк спортсмен Даниил Лысенко ăмăртрӗ. Иккӗшӗ те пӗр шайра пулчӗҫ, юлашкинчен Ухова ытларах ăнчӗ.

### Елена Наговицынăн – «бронза»

Виҫҫӗмӗш кун тӗрлӗ дистанцие чупакансем старта тухрӗҫ. Чăваш спортне юратакансемшӗн уйрăмах интереслӗ пулчӗ. 10 пин метрлă дистанцире тӳрех виҫӗ спортсменка ăмăртрӗ. Вӗсем – пултаруллă марафонҫăсем Альбина Майоровăпа Наталья Пучкова тата 2012 ҫулхи Олимп вăййисене хутшăннă Елена Наговицына. Ку тупăшура олимпҫă тӳрех лидерсен йышне тăчӗ, ҫавăнпа пурте унран медаль кӗтрӗҫ. Телее, Е.Наговицынăна ăнчӗ – «бронза». Чăваш Ен стайерӗ дистанцие 32 минут та 14,43 ҫеккунтра вӗҫлесе пирӗн командăна пухмачне виҫҫӗмӗш наградăпа пуянлатрӗ.

– Паянхи стартра ҫăмăл пулмарӗ. Юрать, ҫумăр ҫурӗ. Унсăрăн тата йывăртарах килетчӗ, – терӗ Елена Олимп вăййисене хутшăнма кăмăл пуррине пӗлтерсе. Арҫынсен турнирӗнче пӗртăван Анатолипе Евгений Рыбаковсем ылтăнпа кӗмӗл медальсене ҫӗнсе илчӗҫ. 10 пин метра чупас енӗпе ăстаскерсем дистанци тăршшӗпех малтисен ретӗнчен каймарӗҫ.

Чăваш Ен спортсменӗсенчен ҫавăн пекех сăнă ывăтакан Вера Ребрика тата Владимир Попов атлета /10000 м/ палăртас килет. Вӗсем тӗрлӗ ăмăртура лайăх ҫитӗнӳсем турӗҫ.

**Андрей МИХАЙЛОВ.**

ЧР ПА сайтӗнчи тата Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчӗкӗсем.

**Дмитрий ШЛЯХТИН, РФ ҫăмăл атлетика федерацийӗн президенчӗ:**

– Федерацин паянхи тӗллевӗ – Раҫҫей спортсменӗсене Олимп вăййисене хутшăнма майсем туса парасси. Ку енӗпе эпир пирӗнтен мӗн килнине пӗтӗмпех тăвăпăр, вӗҫне ҫитиччен кӗрешӗпӗр. «Йӗркене пăсман атлетсен тӗнче ăмăртăвне кайма ирӗк пур. Вӗсен йышӗ пӗчӗк мар. ИААФ ертӳлӗхӗ ырă улшăнусене шута хурасса, йывăр лару-тăрура Олимп комитечӗ пире пăрахмасса шанас килет.

**Юрий БОРЗАКОВСКИЙ, Раҫҫейӗн пӗрлештернӗ командин тӗп тренерӗ:**

– Пирӗн спортсменсем шанăҫа ҫухатмаҫҫӗ. Вӗсем унччен пекех тренировкăра ăсталăха туптаса Олимп вăййисене хутшăнма хатӗрленеҫҫӗ, кашниех унта лекес шухăшпа пурăнать. Эпир яланах тӗнчере чи вăйлисем пулнă, пирӗннисем ҫӗнтерӳпе пӗрре мар таврăннă. Кăҫал атлетсене тӗнче аренинче тупăшма май памарӗҫ пулин те Олимпиадăра хамăра лайăх енчен кăтартас килет.

**Елена ИСИНБАЕВА, РФ спортăн тава тивӗҫлӗ мастерӗ, Олимп чемпионки:**

Олимпиадăра ăмăртасси – кашни спортсменăн ӗмӗчӗ. Унта хутшăнас тӗллевпе эпир кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлетпӗр, ăмăртусенче хамăр ăсталăха туптатпăр. Олимпиадăна хутшăнма ирӗк паманни манăн пӗтӗм шухăш-тӗллеве тӗп тăвать. Ҫапах эпӗ те ырра ӗненетӗп. Раҫҫей спортсменӗсен унта пулмаллах, мӗншӗн тесен эпир пуринчен те вăйлăрах! Эпир ҫӗнтеретпӗрех!

# Акатуйра вăйă картине тăчĕç



Пĕтĕм чăвашсен Акатуйне иртнĕ çулсенче «Шупашкар: 500 çул» паркра йĕркелеккенччĕ. Правительство хăйĕн хӳттине илнĕренпе Хĕрлĕ тӳремре иртет вăл.

Кăнтăрла çитиччен пултарулăх ушкăнĕсем вăйă картине тăчĕç. Чуна тыткăнлакан юрă-кĕвĕ Атăл çийĕн вĕçсе таврана сарăлчĕ.

Авалхи йăлана пăхăнса мăчаварсем пил парчĕç, чӳк турĕç, ватгисене асăнса Юпа çумне хăю çыхрĕç.

Çакуяв çулсерен вăйилсе пыни куçкĕрет. Тĕнчен, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен çитнĕ йăхташăмăрсем чăвашла кăна калаçаççĕ. «Вăйă картине тăрсан ачалăха таврăннăнах туйăнчĕ. Кунта хуран куклипе хăналарĕç. Çак апата хăçан çиниччĕ те маннăччĕ. Эстони чăвашĕсен пысăк салам каласа ячĕç», – «Нарспи» ушкăнĕнчи Лидия Григорьевăн кăмăлĕ çĕкленӳллĕ.

«Мĕншĕн пирĕн тăвансем пит лайăх-ши?

Килес килет, каяс килмест.

Мĕн тăвам-ши?..» – янратаççĕ инçетрен килнисем.

«Эпĕ Самар облаçĕнче çуралнă, халĕ Чулхулара пурăнатăп. Пĕчĕк чухне хăлха патне радио тытса юрланине итлеттĕм. Халĕ хам та пултарулăх ушкăнĕн йышĕнче пулнишĕн савăнатăп», – тет Лидия Уткина.

Пенза чăвашĕсем Республика кунне тăвatтăмĕш хут килнĕ. «Çакăнта вĕçсе çитнĕнех туйăнчĕ. Киле таврăнсанах татах уява килмелли вăхăт çитессе кĕтме пуçлăпăр», – чуна уçса калаçаççĕ хĕрарăмсем.

«Мĕнле илсе килме пĕлчĕç-ши пире çакăнта? Уяв илемĕ пурăнма вăй-хăват парать», – теççĕ Комсомольски районĕнчи Аслă Чурачăкри 81-ри Клавдия Варламовăпа 77-ри Лидия Лукьянова. Çамрăк чухне колхозра йăлтах алăпа ĕçленине, 5-шер ача çитĕнтернине асаилчĕç вĕсем. Алăстисем çапплипех тĕртеççĕ, тĕрлеççĕ, çыхаççĕ.

«Çакнашкал уяв йĕркелеме вăй çитерни мăнаçлăх туйăмĕ çуратать. Чăвашсем – пурте тăвансем. Пирĕн пĕр шухăшлă пулмалла, пĕрле пурăнмалла», – теççĕ Çĕрпӳ районĕнчи «Сăрнай» ушкăнĕнче юрласа ташлакансем.

### Чăваш кил-çурчĕ

Хĕрлĕ тӳремре кашни района вырăн уйăрса панине те хăнахрăмăр. Республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнче тĕпленнисен кил картине кĕрсе тухакан йышлă.

Канашри таврапĕлӳ музейĕн ĕçченĕ Геннадий Захаров ачасене тăмран кăкшăм ăсталама вĕрентет.

«Эпир паян 5 сехетрех çула тухнă», – сывлăш çаврăса илме ларнă Шăмăршăсем манпа калаçу пуçарчĕç. Лидия Малеевăн тĕрĕллĕ-эрешлĕ нускисене илсе килнĕ вĕсем.

Муркаш районĕнчи Тамара Петровăн шăрçи, салфетки патĕнчен те чарăнмасăр иртме çук. Пирĕн тăрăхра чăн ăстасем пурăнаççĕ.

Çĕмĕрлесем Кино çулталăкĕнче «Иван Васильевич меняет профессию» илемлĕ фильм сăнарĕсене çаврăннă. Вĕсемпе черет тăрсах сăн ӳкерĕнеççĕ.

Вăрнарти ӳнер шкулĕнче ĕçлекен Елена Есенцева уй-хир чечекĕнчен пуç кăшăлĕ çыхать. Хамăр тăрăхра ӳсекен курăксенчен тĕрлĕ панно хатĕрленĕ вăл. Шăрши, чăнах, чуна уçса ярать. Унăн ал ĕçĕсем чирлĕ çынна вăй илме, усал вăйран хӳтĕленме пулăшаççĕ.

Уява килекенсем темĕн тĕрлĕ апат пĕçернĕ, сăра вĕретнĕ. Хăна пăхма пĕлет чăваш халăхĕ!

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

# Ачасем мĕнрен кая?

**Ытларикун Шупашкарта, Андриян Николаев ячĕллĕ паркра ача-пăча Акатуйĕ иртрĕ. Ăна хулара виççĕмĕш çул йĕркелеççĕ.**

«Аслисем çуллен Акатуй ирттерсе ака-суха уявĕ вĕçленнине паллă тăваççĕ. Ачасем мĕнрен кая тата? Вĕсем те çулталӑкĕпех тар тăкнă, йывăр сумка йăтса кашни кун шкула ăс пухма чупнă. Вĕренӳ çулĕ вĕçленнине уявламаллах», – палăртрĕ Акатуя пуçланă май Шупашкарти централизациленĕ клуб тытăмĕн директорĕ Любовь Кузнецова.

Кунта хулари шкул çумĕнчи лагерьсенчи ачасем, фольклор, юрă-ташă ушкăнне çӳрекен чăваш чунĕллĕ çамрăксем пухăнчĕç. Асатте-асанне, кукамай-кукаçи йăли-йĕркине сума суни куçкĕрет: шур акăшсене аса илтерекен шăпăрлансем карталанса хĕвеле май çаврăнчĕç. Уява пурте чăваш тумĕпе килнĕ. Улăм карта айккинче 9-10 çулсенчи арçын ачасем паттăр ятне çĕнсе илессишĕн вăй виçрĕç. Хĕрачасем тĕрлĕ тĕслĕ çипрен пĕчĕк кавирсем çыхрĕç, тăварлă чустаран, тăмран открыткăсемпе теттесем ăсталарĕç. Чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе те сăнласа кăтартрĕç шăпăрлансем. Ятарласа йĕркеленĕ ăсталăх класĕсенче йăх-несĕлĕн ал ĕçĕсемпе паллашрĕç. Кунта чăваш хĕрарăмĕсен алкавăчăрипе хушпу-тухья куравĕ те ĕçлерĕ.

Ача-пăча Акатуйĕ çулленех хăйне евĕрлĕ иртет. Кăçал Ĕç çынни çулталӑкне халалласа «Çын ĕçпе илемлĕ» ӳкерчĕксен конкурсне йĕркеленĕ. Акатуйăн пĕчĕк хăнисем çак кун кăмăл туличченех паркра чуччу ярăнчĕç, юрласа-ташласа савăнчĕç. Ача-пăча Акатуйне малашне республика шайĕнче ирттерессипирки те калаçу пуçарчĕç.

**Елена ГЛУХОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.



# сăпка çакаççĕ

Унăн пусмине пукане валли – кĕпе, сцена çине тухма капмар çипуç çĕлеме туянчĕç. Хальхинче 1 метр та 30 сантиметр тăршшĕ алшăллине тĕртме пуçланă вăл. «Станок умне пĕр эрне лармасанах тем çитмест пек туйăнать. Тĕртме пуçласан ыванни те таçта кайса кĕрет», – чунне уçать арçын.

«Уяв» халăх фольклор ансамблĕ унăн пусмипе тинтерех çĕнĕ çи-пуç çĕлетнĕ. «Халĕ унашкаллине тупса та илеймĕн», – пусма тĕркисене тытса пăхаççĕ аякран килнĕ хăнасем.

Çĕрпӳ районĕнчи Анатолий Григорьевпа, карçинкка çыхаканскерпе, Çĕнĕ Шупашкарти Зинаида Кулаенко пĕр-пĕрне тахçантанпах пĕлеççĕ. Хĕвелхытă хĕртнĕрен хĕрарăм хăва хуллине шывпа йĕпетет. «Куçĕçе хĕлле е çумăрлă çанталăкра пуçăнмалла та...» – вăрттăнлăха уçаççĕ ăстасем. Вĕсен карçинккисене эпĕ те куç хыврăм, туянмасăр иртсе каяймарăм.

Чăваш хĕрĕсем Ольга Кондратьева, Светлана Лотова, Ольга Волкова улахри пекех лараççĕ. Пĕри – тĕрлет, тепри – ӳкерет, виççĕмĕшĕ пукане ăсталать. Кашниех хăйĕн ĕçне çĕр ĕçченĕпе çыхăнтарнă.

Кăçхине республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Руç ăстисем» конкурса хутшăнакансемпе курса калаçрĕ. «Сирĕн ĕçĕрсем – пысăк пуянлăх, мĕншĕн тесен унта чун хĕлхемне хăваратăр», – терĕ вăл.

### Çи-пуçĕ музей экспоначĕ пекех хаклă

20 сехетре Хĕрлĕ тӳремре халăх пултарулăхĕн «Раççей çăлкуçĕсем» фестиваль пуçланчĕ. «Йăлана кĕнĕ çак фестиваль вăй илнĕренпе пĕр ăру çитĕнчĕ. Эпир хамăр культурăна сыхласа хăвартăмăр. Наци пуянлăхне çамрăк ăрун аталантарса пымалла», – сăмах илчĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев. Вăл хăнасене пирĕн тăрăха килнĕшĕн тав турĕ.

РФ Патшалăх Думин депутачĕ Алена Аршинова чăвашла юрласа пурне те тĕлĕнтерчĕ. «Çакăнта килнисен вĕри чĕрисен витĕмĕпе паянхи уяв ăшăрах, çутăрах», – терĕ вăл.

Эсир хăçан та пулсан 17 регионтан килнĕ 17 ушкăн пĕрле ташласа юрланине курнă-и? Куçпа виçейми çак илем мăнаçлăх туйăмĕ çуратать. Чăнах, ăруран ăрăва куçакан тĕрлĕ наци культурипе, йăли-йĕркипе пуян пирĕн çĕршыв.

«Эпир çынсене савăнăç парнелетпĕр. «Радеюшка» ушкăн йĕркеленнĕренпе 81 çул çитрĕ. Пирĕн çи-пуç та музейри экспонат пекех хаклă. Ăна куç пекех упратпăр, пысăкуявсенче кăна тăхăнатпăр», – чуна уçса калаçаççĕ Архангельск хăнисем.

Ярославльти «Чарочка» юрă-ташă ăстисене Чăваш Ен куракансем лайăх ас тăваççĕ. Вĕсем пирĕн тăрăха çав тери юратаççĕ. 12-ри Настя Рыжова, 10-ри Катя Гневышева, 11-ти Мария Карежина, тĕслĕхрен, 4 çултанпах сцена çинче. «Эпир вĕренӳ çулĕ вĕçнеччĕн хатĕрленетпĕр». Пире кирек ăçта та ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Уявран ялан сувенирсем илсе таврăнатпăр», – йăл кулăпа çуталнă хĕрсен сăн-пичĕ.

Ленинград облаçĕнчи «Вересть» фольклор ансамблĕнчи Екатерина Павлова пĕчĕк ачипех килнĕ уява. Унăн ашшĕ – Чăваш Республикинчен. Çавăнпа кунта хăйне килти пекех туйнине пытармасть çамрăк хĕрарăм.

Севастопольсем «Яблочко» ташăпа куракана тыткăнларĕç. «Шолоховская весна» фестиваль валли 5 сехетре хатĕрленсе çитернĕччĕ ăна. Халĕ çĕршывĕпех кăтартса çӳретпĕр», – каласа кăтартать Виталий Орлов.

Дагестан ташă ăстисем Францире, Италире, Испанире, Португалире... хăйсен ăсталăхне кăтартнă. «Çапах Раççейре ташлама ытларах килĕшет», – пĕр саслăн ăнлантараççĕ вĕсем хура çивĕтлĕ чиперккесем.

Республика çыннисем те, хăнасем те уявпа кăмăллă. Аякран килнисем ятарласах чăваш сăмахĕсене вĕренни асра юлчĕ. Вĕсем пирĕн тăрăха татах килесшĕн.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
ЧР ПА сайтĕнчи тата автор сăнӳкерчĕкĕсем.





ЭХ, ÇАМРĂКЛĂХ...

# Упăшкана юрас тесе...

Манăн упăшка çав тери маттур. Бригада пуçтарать те Мускава е Чулхулана тухса каять. Ĕçлекенсене мĕн чухлĕ укçа панине пĕлместĕп, анчах хăйĕн енчĕкĕ ялан тулли. Юлашки çулсенче эпир темиçе хваттер илтĕмĕр: пĕри тепринчен чаплăрах. Чи лайăххинче хамăр пурăнатпăр, ыттисене тара панă.

Эпĕ аслă пĕлÿ илмен, унсăрăн тантăшсем пек пĕр-пĕр офисра лараттăм. Ачасене садике ярсан килте сериал пăхса ларма аванмарлантăм, ĕç шырама пуçларăм. Халĕ лавкка нумай та – пур çĕрте те сутуçă кирлĕ.

Ку ĕç мана кăна мар, упăшкана та аптăратса çитерчĕ. Халĕ манăн мар, унăн садике чупмалла. «Ĕç пăрах та килте лар!» – терĕ пĕррехинче çирĕппĕн. Хаваслах!..

Темшĕн кăмăлĕ улшăнма пуçларĕ унăн. Çĕрулми çунса кайнăшăнах ятлаçать. Хамах айăплă, кино интереслĕччĕ те реклама пуçланасса кĕтрĕм.

Тепрехинче кĕпине çуманшăн кăшкăрашма тытăнчĕ. Ара, урăххине тăхăнма çук-им? Шкап уç та – кирек хăшне суйла.

Килте тирпейлесе йăлăхса çитрĕм. Сериал та килĕшми пулчĕ. Кунĕпе тенĕ пек апат пĕçеретĕп – тав тăвакан та, турилкке çăвакан та çук.

Пысăк укçа ĕçлесе илекен упăшка хăйне ытла ирĕклĕ тытать. Ăçта, кампа кайнине каласа та хăвармасть. Капла уйрăлса каясси те часах.

Хамăн пурнăçа лайăх енне улăштарас тесех университета вĕренме кĕтĕм. Тинех упăшка мана хисеплеме пуçланăн туйăнать.

Ачасем шкула кайма пуçларĕç. Кĕçех эпĕ те диплом илсе хайхи офиса ĕçе вырнаçăп.

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Арăм патне – улаха

Дина – хăйне юратакан хĕрарăм. Лавккара е пасарта йÿнĕ япала тытса та пăхмасть. Ятуллă тумтир кирлĕ ăна. Ачисене те капăр тумлантарать. Урамра хитре çÿреççĕ вĕсем. Кану вырăнĕсене юратаççĕ. «Килте ларма хăнăхман эпĕ. Тулăх пурнăçра çитĕннĕ», – ялан çапла калать Дина. Колхоз председателĕнче ĕçленĕ ашшĕ ачисемшĕн нимĕн те шеллемен паллах.

...Дина яштака та патвар яша хăех суйласа илчĕ. Чылай чупрĕ ун хыççăн. Лешĕ юлашкинчен парăнчĕ курăнать – хĕре киле ăсатма пуçларĕ. Кăштахранах мĕнешкел чаплă туй йĕркелерĕç ялта. Председатель хĕрĕ качча тухать вĕт! Ашшĕ çамрăк мăшăра хваттер илсе парасшăнччĕ те – ĕлкĕреймерĕ, çав вăхăталла самана та, укçа та улшăнчĕ.

Арăмĕпе упăшки ялтан хулана куçрĕç те общежитире пÿлĕм туянчĕç. Дина икĕ ывăл çуратрĕ. Малтан йĕркеллех пурăнчĕç вĕсем. Сергей ĕç пăрахсан килте укçа çитсе пыми пулчĕ. Арçыннăн ирĕксĕрех ют хулана тухса кайма тиврĕ. Те çавăнта ĕçме вĕренчĕ вăл?

«Хальччен тахçанах хваттер туянмаллаччĕ. Сана пула çак пÿлĕмрен тухаймастпăр. Ăна та пулин атте илсе панă», – килти вăрçа пĕрмай çак сăмахсенчен пуçлать хĕрарăм. Пĕрре упăшкин япалисене пуçтарчĕ те чăматана алăк патне кăларса лартрĕ вăл. Сергей килтен шăппăн тухса кайрĕ, аппăшĕ патĕнче хăтлăх тупрĕ. Унта та ытлашши пулнине туять арçын. Эх, çав хăйне алăра тытайманни йăлт аркатать.

Урă упăшкана киле кĕртет Дина. Унăн пур-çук укçине илсе юлать. Хăш чухне сывăрма та хăварать ăна. Анчах малалла пĕрле пурăнасси пирки калаçмасть. Ялта хуняшшĕпе хунямăшĕ те хапăл мар кĕрĕвне. Ăса мĕн чухлĕ вĕрентмен пулĕ ăна – усси курман.

Пÿлĕмри юсав ĕçĕсене те хăех пурнăçлать Сергей. Пулăшма чĕнсенех – чупса çитет.

Уявра та пĕрле мар вĕсем. Нумай чухне Дина ачисемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ патне каять. Тунсăх пуссан упăшки патне СМС-çыру вĕçтерет. Тулăх пурнăç, вĕçĕ-хĕррисĕр юрату сунать ăна.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ЧУНРИ

# Юрла, саркайăкăм

Ĕнерхи уяр кун таçта çухалчĕ. Сар хĕвеле хура пĕлĕтсем хупăрларĕç. Пĕччен те хăр тăлăх юлтăм çак çĕр çинче. Чавса çывăх та – çыртаймăн. Мĕнех, йывăр пулсан та чăтăп, шăпа пÿрнинчен иртеймĕн теççĕ.

Авланнă арçынпа çыхланма мĕне кирлĕччĕ-ши мана? Каччă тупаймастăмччĕ-ши? Çемйине пăрахса ман пата килĕ терĕм-ши? Эх, хĕр чухне ытла та айван-çке эпир, арăмĕ пуррине систерчĕç-çке малтанах. Аннен пĕр сăмахне те хăлхана чикмерĕм. Ĕненмерĕм, пĕр çынна та итлемерĕм, сивĕтесшĕн, ахаль çеç калаççĕ пуль терĕм. Тепĕр тесен, пуçа çухатасла, çунатланса вĕçекенскере авланни мĕне пĕлтеретчĕ-ши? Халĕччен никама савса курманскер ытам тулли чечексем, шăккалат-канфет парнеленине, ăшă сăмахсемпе йăпатнине юрату вырăнне йышăнтăм-ши?

Пахчари улмуççи шап-шурă чечекречĕ ун чухне. Садра саркайăк каçăхса кайсах юрă шăрантаратчĕ. Сана курнă-курман чĕрем хыттăн тапма пуçлатчĕ. Кашни каçа чăтăмсăррăн кĕтеттĕм. Пĕрремĕш хут хыттăн-хыттăн чуптунине епле манăн? Санпа чухне çÿл тÿпере вĕçеттĕм. Уйăх çине хăпарса анаттăм. Вăхăтлăх телей çинчен шухăшлама та пултарайман çав ун чухне. Айван мар-и, ĕмĕр пĕрле пулăпăр тесе шухăшларăм. Ытла та хăвăрт килчĕ уйрăлу, хăй хыçĕнчен чĕрене касса татакан ырату çеç хăварчĕ. Коля темĕн пытарнăн туйăнатчĕ манран, ыйтма хăяймастăмччĕ.

Мĕнех, пĕрисене качча илесçĕ, теприсемпе пуканелле выляççĕ те пăрахса хăвараççĕ. Хам айванни пирки ултав серепине çакланнăшăн кам айăплă халь? Çавă кирлĕ те мана. Тинех пурнăç çине урăхларах куçпа пăхма тытăнтăм. Арăмĕ пурриине ĕненмерĕм малтан, авланнă арçынпа нихăçан та çыхланас çукчĕ. Купăста яшки ялан йăлăхтарать теççĕ, çавăншăн çеç çÿренĕ иккен ман пата Коля. Таса хĕре çыпăçиччен пĕр-пĕр инке арăм е пĕччени патне сукмак хывайман-ши? Çук, ман пекки, çинçе пилĕкли, пилĕк таран çÿçли, хăй калашле, пукане пек капăр çÿрекенни кирлĕ пулнă ăна. Халь авă телефон номерне те улăштарнă. Пĕлетĕп, çăмăлттай арçын тата урăххи, çĕнни тупнă. Хăй каланă тăрăх, арăмĕ кĕпе-йĕм çума, апат пĕçерме çеç кирлĕ-çке ăна.

Юрламасть текех садра саркайăк. Ывăнса çитрĕ-ши? Е эпĕ илтместĕп-ши? Пĕччен юлнишĕн чунăм касса ыратать. Тантăшăмсем тахçанах мăшăрлă ĕнтĕ. Ман та ку çулла шап-шурă пĕркенчĕк тăхăнас килетчĕ.

Çут тĕнчерен уйрăлас умĕн асанне пил парса хăварнăччĕ мана. Паян садра саркайăк юрламаннишĕн макăрса çитет пулĕ. 27 çулта çеç-ха эпĕ. Ватта юласран хăрама пăрахнă ĕнтĕ. Ĕçтешĕм пĕрмай: «Арçынсем килеççĕ те каяççĕ», – тет. Çу иртĕ, кĕр çитĕ. Сивĕ çил-тăман хыççăн каллех çуркунне килĕ. Ман пахчана та саркайăк иленĕ. Чи çепĕç юррине ун чухне савнипе иксĕмĕр валли çеç шăрантарĕ. Юрла, саркайăкăм, юрла...

**ОЛЬГА.**
Канаш районĕ.

ÇЕМЬЕ

# Юрату çуначĕ

**Хулана каç чатăрĕ хупласа килет. Çÿллĕ тÿпере çăлтăрсем çуталаççĕ. Пуш уйăхĕ пулин те каç сивĕ пуласса шантарать. Анчах шартлама – тулта, кантăк леш енче. Пÿлĕмре вара ăшă та хăтлă. «Пирĕн çемье» конкурса сочинени çырма хатĕрленетĕп. Мĕнле тема суйламаллине пĕлмесĕр асапланатăп. Анне ман пата шăппăн пырать, ыталать, тетрадь тăсать.**

**– Илех. Тен, кирлĕ пулĕ. Ку – манăн кун кĕнеки.**

## Анне çырнинчен

**Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕ.** Паян çут тĕнчене манăн хĕр пĕрчи килчĕ, манăн пĕчĕк хĕрĕм! Тĕлĕнтермĕшрен те тĕлĕнтермĕш. Эсĕ нихăçан та пулман, халĕ – пур. Эпир паянтан иккĕн – çакна ниепле ĕненейместĕп. Палатăна илсе килнĕ чăмаккана асăрхансa тытатăп та çÿççĕр пуç, куç харшисĕр хĕп-хĕрлĕ пит куратăп. Анчах та чĕрĕ! Сывлама та, хускалма та хăратăп. Турăçăм! Мĕн тери хаклă маншăн çак тĕркем! Оленька! Хĕрĕм! Сана телейлĕ тăвасшăн тăрăшма тупа тăватăп.

**Юпа уйăхĕн 14-мĕшĕ.** Юпа уйăхĕ ăшă та хĕвеллĕ çанталăкпа савăнтарать. Йывăç çинчен ылтăн çулçăсем çаплипех ÿкеççĕ. Паян эпир ача çуратмалли çуртран киле таврăнтăмăр. Сана диван çине хутăм, шупка хĕрлĕ хăйăва салтрăм, утияла салатрăм, унтан ереше, фланель, ситцă, марля кипкесене... Çаксен айĕнче урисене хуçлатнă пĕчĕкçĕ кĕлетке курăнчĕ. Алли çинче – паллă. Унта манăн ятпа хушамат. Аяларах – «хĕрача. 09.10 07.30 минут, 3500» тесе çырнисем. Апат çитерсен сана вырăн çине вырттартăм. Мурка сиксе хăпарчĕ те шăршларĕ, çулларĕ, юнашар выртасшăн пулчĕ. Унăн манăн тĕлĕнтермĕшĕм çумне перĕнес килчĕ-тĕр.

**Юпа уйăхĕн 26-мĕшĕ.** Пурнăçăмра пĕтĕмпех улшăнчĕ. Талăкра 6 хутчен апатлантаратăп, пĕр купа кипке çумалла, уçăлса çÿремелле, каçхине шыва кĕртмелле, çĕрлесерен канăçсăрланса йĕнĕрен лăплантармалла. Сана кÿренме пулать-и вара? Пÿрнÿсем мĕн тери пĕчĕк, эпĕ вĕсене ăнсăртран ыраттарасран хăратăп та. Çав тери çăмăл эсĕ, черчен. Калаçма та пĕлместĕн. Мĕн ыратнине, каçсерен мĕншĕн кутăнлашнине те пĕлтерейместĕн. Çавăнпах саншăн тăтăшах пăлханатăп.

**Çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕ.** Лăпкă, ăшă каç. Тин çеç çумăр иртсе кайрĕ. Вăл пирĕн чÿрече айĕнчи курăкпа панулми йывăççине уçăлтарчĕ. Клумба çинчи чечексем те ырă шăршипе савăнтараççĕ. Анчах килтен тухас та килмест. Оленька хăйĕн сĕтелĕ хушшинче ларать, темĕн ÿкерет. Эпĕ ăна сăнанă май аса илĕве путатăп, вăхăт хăвăрт иртнинчен тĕлĕнетĕп. Тин кăна кашни çĕнĕ шăлу тухнишĕн савăнаттăм, алăран çавăтса çÿреттĕм, пĕрремĕш утăм тума ниепле те хал çитерейместĕн, юмах вулаттăм, эсĕ татах-татах ыйтаттăн. Ача садне çÿрерĕмĕр... Пĕчĕк аллунтан çавăтаттăм та çав тери лайăхчĕ.

Пĕррехинче, виçĕ çул çурăра чухне Оленька ман пата чупса пычĕ те чĕрçи çине хăпарса ларчĕ, мăйран уртăнчĕ:

– Анне, мĕншĕн туяннă эсĕ мана?

– Сана пĕрре курсах юратрăм.

Шăп тăрса шухăшларĕ те:

– Эпĕ те. Çакăн пек ăннă иксĕмĕре те.

**Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ.** Пĕрремĕш класа ĕнер çеç кайнă тейĕн. Ку пирĕншĕн чăн-чăн уяв пулчĕ. Хĕвел çутипе тулнă шкул картишĕ. Чечек тинĕсĕ. Савăк сăнсем. Çĕнĕ форма, пысăк хăюсем. Унтан – килти ĕçсем, малтанхи йывăрлăхсем. Вĕсене манăн шкул ачи шăл çыртса парăнтаратчĕ. «Пиллĕксемпе» савăнтаратчĕ, çавранăçуллăччĕ. Ун çине пăхатăп та шухăша путатăп: вăл – манăн пурнăç тĕллевĕ-çке.

**Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕ.** Паян Оленька санăн çуралнă кун. Эсĕ халĕ 16-ра! Чипер, ăслă, ырă кăмăллă çитĕнтĕн. Санăн халĕ хăвăн юлташсем, чун киленĕçÿ. Анчах аннÿшĕн паянхи кун çав-çавах уяв.

Ытларах хумханма тытăнтăм. Эсĕ кăштах кая юлсан та пăшăрханатăп, Турăран сана çыхлама ыйтатăп. Тĕпренчĕкĕм усал илĕртмĕшсемпе çеç ан çыхлантăрччĕ. Ман пек ан йăнăштăрччĕ çеç. Çавах та эпĕ пурнăçăмра эсĕ пурришĕн савăнатăп. Çуралнă кун ячĕпе, хĕрĕм! Анне юратăвĕн çунаттисем çÿле-çÿле çĕклесе пĕлĕтсĕр инçĕшне илсе кайиччĕ. Кулленхи йывăрлăхсемпе пăтăрмахсенчен хăтариччĕ.

* * *

Аннен кун кĕнекине вуласан уншăн пурнăçра чи кирли – ачасем иккенне ăнлантăм. Вилĕме куçран пăхнă чухне те ывăл-хĕрĕ çинчен шухăшлаççĕ вĕсем. Анне çеç пурне те каçарма пĕлет. Саккунпа çынсем ăнланман чухне те.

Ахальтен мар çĕр çинчи кашни халăх амăшне хисеплет. Ун çинченех сăвăсем, юрăсем, легендăсем хайлать.

Аннесем пĕчĕк чăмаккана çутă тĕнчене асап урлă илсе килеççĕ те вĕсенчен патвар каччăсемпе чипер хĕрсем туса ÿстереççĕ, ырă ĕçсем тума пиллеççĕ, шăппăн çеç кĕлĕ вулаççĕ, ăнăçу сунаççĕ. Шăпах аннесем – чиксĕр юрату çăлкуçĕ.

Анне çине пăхатăп та куçа илейместĕп. Эпир иксĕмĕр пĕр организм пек туйăнать. Куçа хупсан та палланă, чи çывăх, ачаш, хаваслă сасă илтетĕп. Унăн куçĕ савăнăçпа çиçнине курсан ăшăлăхпа лăпкăлăх шăпах вĕсенчен тухса йĕри-тавра саланнине ăнланатăп. Вĕсем манăн чуна пĕтĕмпех туяççĕ. Анне йăл кулсан эпĕ те кулатăп. Тавах сана, анне.

**Анна РЫЖАЙКИНА.**
**Улатăр хули.**

# Телей хыҫҫӑн чупса

Владимир КУЗЬМИН

Ертсе пырас ҫӗрте ӗҫлекенсен ятарлӑ шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ Максим Максимович Крутова «Шурӑмпуҫ» колхоза ячӗҫ. Пӗрлешӳллӗ вӑтам шайри хуҫалӑха кӗрекен Хурӑнвар, Тарӑнвар тата Кайривар ялӗсем Сунар улӑхӗ тӑрӑх йӗркипе ларса тухнӑ. Хурӑнварӗпе Тарӑнварӗ айлӑмра, Кайриварӗ – юханшыв леш енче, тӑвайккире. Правлени Тарӑнварта, колхоз варринче, вырнаҫнӑ. Ҫӗрӗсем вӗсен вунпилӗк ҫухрӑмах тӑсӑлаҫҫӗ, вӑрман енче «Ҫӑлтӑр» колхоз уйӗсемпе чикӗленеҫҫӗ.

Ҫирӗм виҫҫӗри хӗрӳ каччӑ коммунистсен партийӗн пуҫламӑш пӗрлӗхне ертсе пыма пуҫларӗ. Ун аллинче халӗ утмӑл коммунист – утмӑл кӑмӑл-туйӑмлӑ ял ҫынни. Ӑна Хурӑнварти Ульки акка текен тирпейлӗ, ватталла пуснӑ хӗрарӑм патне пурӑнма вырнаҫтарчӗҫ.

Ульки акка Макҫӑма яшка ӑшӑтса ҫитерчӗ. Вырӑн ҫине выртсан Крутов ниепле те ҫывӑрса каяймарӗ. Тухӑҫ енчи чӳрече йӑмӑх сӑрӑпа сӑрланма пуҫларӗ, майӗпен-майӗпен ҫуталса пычӗ, кӗҫ куҫ-пуҫа шартарса яракан шӗл кӑвар тӗслӗн выляма тытӑнчӗ.

Макҫӑм йывӑҫ кравать ҫинчен тӑрса чӳречерен пӑхрӗ: ҫӗнӗ кун хӗвелӗ таврана ӑшӑ хӗм сапса тӳпенелле кармашать.

Ульки акка тулли витре йӑтса кӗчӗ.

– Сывлӑх сунатӑп, – терӗ ӑна ҫул парса Макҫӑм.

– Тавтапуҫ, ывӑлӑм, ху сывлӑхлӑ пул. Ӑшӑ сӗт ӗҫсе пар-ха, пит усӑллӑ пулаканччӗ вӑл, тин ҫеҫ сунӑ кӑпӑклӑ сӗт.

– Кӑшт тӑхтӑр-ха, Ульки акка, эпӗ ҫӑвӑнам.

– Юрӗ-ҫке, унччен эпӗ сӗтне сӗрем.

Тулта Макҫӑм тавралла пӑхса ҫаврӑнчӗ. Кил-ҫурчӗпе Ульки акан савӑнмаллиех ҫук. Хуралтӑсем хӑй пекех ватӑлса тайӑлнӑ. «Мӗнле те пулин пулӑшмалла», – шухӑшларӗ вӑл сысна курӑкӗ пусса илнӗ кил картинче чупнӑ май. Хул-ҫурӑма ҫемӗҫтернӗ хыҫҫӑн каччӑ ҫӑлран каҫхине ӑсса лартнӑ шывпа пилӗк таран килениччен ҫӑвӑнчӗ те пӳрте кӗчӗ. Ульки акка ӑна сӗт тултарнӑ тӑм курка тыттарчӗ.

– Ҫакна ыйтса пӗлем-ха санран: ӑҫтисем пулатӑн эс, Макҫӑм?

– Каҫарӑр ӗнтӗ мана, Ульки акка, – хӑйӗнпе тӳрех паллаштарайманшӑн ватӑ ҫын умӗнче лайӑхмарланчӗ каччӑ. – Вӑрманкас ачи пулатӑп. Атте-анне унта Тымартан вӑрҫӑччен куҫса пынӑ.

– Тымартан терӗн-и ҫак? «Ҫӑлтӑр» кулхусран-и? Эй, Турӑ, хамӑр ялсемех-ҫке эс. Хам та эп Тымар хӗрӗ, Карӑк Еххӗмӗн ҫиччӗмӗш ачи пулнӑ-ҫке. Краштӑн вӑрҫи хыҫҫӑн ҫакӑнта, Хурӑнвара, Салакайӑк Мӗтрине качча килтӗм. Камсен пулатӑн-ха вара эс, ывлӑм?

– Крутовсен. Максим Матвейч ачи. Анне Урине ятлӑ.

– Крутовсен тетӗн?.. – ҫамрӑк ҫын пек пуҫне вашт! ухрӗ карчӑк. – Вӗсен пулсан Кӑра йӑхӗ ӗнтӗ. Аслаҫупа Матвипе пӗрле выляса ӳснӗ. Хӗлле е пирӗн патра, е сирӗн патра улахраччӗ, ҫуллахи каҫсенче ҫеремлӗ урамри вӑйӑ картинчеччӗ. Ташлама юрататчӗ аслаҫу. Пирӗн туйра та Хурӑнварсене тӗлӗнтерсе хӑварчӗ. Аслаҫу ман шӑллӑмпа Ҫимунпа пӗр тантӑшчӗ, салтака та вӗсене пӗрлех илчӗҫ. Вӑрҫӑран иккӗшӗ те сусӑрланса таврӑнчӗҫ. Аслаҫу ҫав суранранах сывалса ҫитеймерӗ пулас, вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ. Пирӗн Ҫимун кӑштӑртаткаласа ҫӳретха, иртнӗ эрнере ывӑлӗ-кинӗпе пӗрлех Питрава килсе курчӗ. Аҫу-аннӳ сывах пурӑнать-и тата? Эп вӗсене тӗтре ӑшӗнчи пек ҫеҫ астӑватӑп. Ватлӑхра тӑн та пӗтсе пырать ҫав.

– Аптрамасть пурӑнаҫҫӗ темелле-ха. Анне ман шофер, вӑрмантан йывӑҫ турттарсах ватӑлчӗ.

– Ан тӗлӗнтер-ха, пӑх-халӗ ӑна, епле маттурскер, арҫын ӗҫне юратнӑ.

– Атте вӑрманпромхозра, хуралта. Йывӑр ӗҫ тӑваймасть. Вӑрҫӑран сулахай урасӑр таврӑннӑскер, эп астӑвассах протезпа нушаланса ҫӳрет, – чукун утюг ӑшне кӑвар тултарнӑ май ӑнлантарчӗ Макҫӑм.

Кинемей ҫакӑн хыҫҫӑн стена ҫумӗнче ҫакӑнса тӑракан хӑмӑр рама ӑшӗнчи сӑнӳкерчӗксене куҫлӑх тӑхӑнсах пӑхма пуҫларӗ. Макҫӑм та кӑсӑкланса ун ҫумне пырса тӑчӗ.

– Ман та Ваҫҫук ятлӑ ывӑл пурччӗ, аҫупа Макҫӑмпа Тарӑнвар чиркӗвӗнче пӗрле, пӗр хуранта, шыва кӗртнӗскер. Каснӑлартнӑ сан пекскерччӗ, сатурскерччӗ. Ак ҫакӑ вӑл, арӑмӗпе юнашар тӑрать. Ваҫҫук аллинчи – пӗчӗк мӑнукӑм Владик, – шывланнӑ куҫне тутӑр вӗҫӗпе шӑлса илчӗ Ульки акка. – Ывлӑм учитлӑччӗ, кин артискӑччӗ. Вӑрманкасра вӑрҫӑччен кулхус театрӗ ӗҫлетчӗ-ҫке. Артистсем яла камит кӑтартма килсен паллашрӗҫ пулмалла вӗсем, кайран – ҫырӑнсах пӑрахрӗҫ. Ачи ҫуралсан хам та тем пекех савӑннӑччӗ, старик те... Вӑрҫӑ тухсанах Ваҫҫук салтака кайрӗ, хыҫҫӑнах вилнӗ хучӗ вӗҫсе ҫитрӗ. Кин вара ялта нумай пурӑнмарӗ, ачипех таҫта тухса кайрӗ. Те пур вӑл халь ҫут тӗнчере, те ҫук, ачи те чӗрӗ, те вилӗ, нимӗн те пӗлместӗп. Стариккин те телей пулмарӗ, таврӑнаймарӗ вӑрҫӑран. Уҫланкӑри тӑлӑх тунката пек пӗччен тӑрса юлтӑм. Йӗре-йӗрех, куляна-кулянах куҫ вӑйӗ пӗтрӗ ӗнтӗ. Ни вилейместӗп. Пурнас та килмест тепӗр чухне. Ай, ҫав усал вӑрҫа кам шутласа кӑларнӑ-ши ӑна?..

Ватӑ ҫын хуйхине кӑшт та пулин пусарас тесе Макҫӑм ӑна ӑшӑ сӑмахсем каларӗ.

– Лӑплантӑм ӗнтӗ халь, Макҫӑм. Хамӑн ача пӳртре пур пекех туйма пуҫларӑм ӗнертенпе. Турриех илсе килчӗ пуль сана, ывлӑм, ман киле. Сӑпаҫҫипех, – кӗтеселле ҫаврӑнса сӑх-сӑхса илчӗ те вӑл кӑштӑртатса пӳлӗме кӗрсе кайрӗ.

Сӑнӳкерчӗкри ҫамрӑк арҫынна Макҫӑм таҫта курнӑ пекех. Ҫук, ниепле те курма пултарайман вӑл ӑна. Ульки акка каланӑ тӑрӑх, Ваҫҫук Макҫӑм ҫуралнӑ ҫул фронтра пуҫне хунӑ. Апла пулсан ун пек ҫынна тӗл пулнӑ. Сухал хырма пуҫласан тин вӑл ӗнсине кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫса илчӗ: ӑна хирӗҫ тӗкӗртен шӑпах ҫав сӑнӳкерчӗкри Ваҫҫуках пӑхса тӑрать тейӗн. Авӑ, хура ҫӳҫ пайӑрки сылтӑм куҫӗ ҫинех усӑнса аннӑ. Кулнӑран сулахай пит ҫӑмарти чалӑшса туртӑннӑ. Ҫӑра куҫ харшисем, каҫӑртарах сӑмса, хулӑнрах тута хӗррисем, сарлака та ҫӳллӗ ҫамка... «Пулать вӗт тӗнчере пӗр йышши ҫын, Ульки акка ывӑлӗпе мана пӗр тӑванах темелле», – ҫапла шухӑшласа вӑл хӗрнӗ утюгпа шӑлаварне якатма пуҫларӗ.

Тумне йӗркене кӗртнӗ хыҫҫӑн Крутов ӗҫе кайма тухрӗ. Ульки акка ӑна чӳречерен пӑхсах ӑсатса ячӗ.

Сасартӑк алӑка шаккарӗҫ те самантрах пӳрте клуб технички Лютти тата палламан арҫынпа хӗрарӑм кӗрсе тӑчӗҫ. Ульки акка пурне те малалла иртме сӗнчӗ.

– Артистсем илсе килтӗм сан пата, Ульки акка. Йышӑнатӑн-и? – ыйтрӗ техничка. – Песплат концерт кутатӑн.

– Макҫӑм хирӗҫлемесен мана ҫавах, – терӗ кил хуҫи.

Крутов ухутах пулчӗ, Лютти тухса кайсан артистсемпе паллашрӗ. Кусем арӑмӗпе упӑшки, Антонина Ивановнӑпа Михаил Степанович Керженевсем, пулчӗҫ иккен. Ульки акка тӗпелте аппаланнӑ вӑхӑтра Максим Максимович Чулхула ҫыннисене кунти пурнӑҫпа, чӑвашсен йӑлийӗркипе кӗскен паллаштарчӗ, хӑй, унта вӗренме кайма хатӗрленекенскер, юнашарти хула ҫинчен ыйтса пӗлчӗ. Антонина Ивановна арҫынсен калаҫӑвне хутшӑнмарӗ, стенаран ҫакса янӑ рамӑсен умӗнче сӑнӳкерчӗксене тимлесе пӑхса тӑчӗ. Вырӑнтан хускалмасӑр сӑнарӗ вӑл пӗчӗк ача тытнӑ ҫамрӑк арҫынпа хӗрарӑма. Крутов ҫакна асӑрхарӗ те васкасах ӑнлантарма пуҫларӗ:

– Кусем пирӗн кил хуҫин, Ульки аккан, ачипе кинӗ, аллинчи – мӑнукӗ. Тахҫан ӳкерттернӗскерех, сарӑхма та пуҫланӑ авӑ. Ывӑлӗ, Ваҫҫук ятлӑскер, иртнӗ вӑрҫӑра вилнӗ тет. Кинӗпе ачи ӑҫтине халӗ те пӗлмест вӑл. Мана Ульки акка ялан калать: «Эс каснӑлартнӑ ман Ваҫҫук пек», – тет. Чӑнах та, хама та ун пекех туйӑнать. Пӗр пекрех ҫын сахал-им тӗнчере? Ҫапла вӗт?

– Пулма пултарать, – унпа килӗшсе пуҫне сӗлтрӗ Керженев.

Максим Максимович сӑмахӗсем Антонина Ивановнӑшӑн ҫурмаран каснӑ пекех пулчӗҫ. Вӑл пӗрре ача тытса ларакан Ваҫҫук ҫине, тепре хӑйне ӑнлантаракан Крутов ҫине пӑхрӗ те чӗрине ярса илчӗ.

– Чӑнах та, пулать ун пекки, пӗр евӗрлӗ ҫын нумай тӗнчере. Миша, йывӑр мана, ӗшентӗм ҫул ҫинче, сумкӑран таблетка кӑларса пар-ха... – ахлата-ахлата пукан ҫине сӗвенчӗ хӗрарӑм.

– Чӗрепе аптӑрать, – ӑнлантарчӗ упӑшки, – каларӑм килтех юл тесе, итлемерӗ, каяпах Шупашкара тет. Хӑй вӑл Чӑваш Енрен-ҫке.

Клуба Крутовсем Ульки акканӑ та илсе кайрӗҫ, малти ретех кӗртсе лартрӗҫ. Антонина Ивановна вырӑс юррисемпе пӗрле чӑвашсен «Вӗҫ-вӗҫ куккукне» шӑрантарсан халӑх тӑвӑллӑн алӑ ҫупрӗ.

– Вӑт майра те эс ӑна, пӑххалӗ мӗнле юрлать, – тӗлӗнсе ларчӗ Ульки акка. – Ман кин те чӗкеҫ пекехчӗ те ҫав, мӗн тӑвӑн ӑна, пурнӑҫа, халь пӗччен эп, тӑлӑх тунката пек пӗччен. Татах юрлать-ши чӑвашла, ыйтса пӑхха, Макҫӑм?

Крутов сцена ҫине хут ҫырса пачӗ. Кӗҫех Антонина Ивановна «Хваттер хуҫи Ульки акка ыйтнипе «Вуник кӑшӑллӑ» юрӑ юрлатӑп», – тесе пӗлтерчӗ. Баянисчӗ кӗввине пӗлмест, артистка унсӑрах шӑрантарчӗ хӑна юррине. Ял халӑхӗ тӑвӑллӑн алӑ ҫупрӗ. Савӑннипе Ульки акка ура ҫинех сиксе тӑчӗ.

Ытти артистсен номерӗсем хыҫҫӑн сцена ҫине каллех Антонина Ивановна тухрӗ, куракансене шӗвӗр туя вӗҫӗнче турилккесем ҫаврӑнса тӗлӗнтерчӗ.

Тепӗр кунне Керженевсем Ульки аккапа сыв пуллашрӗҫ.

Антонина Ивановна автобусра Вӑрманкаса ҫитиччен никампа калаҫмасӑр шӑла ҫыртса пычӗ, хӑйне кам та пулин сӑмах хушсан та пуҫӗпе сӗлтсе евитлерӗ ҫеҫ.

**(Малалли пулать).**

## СӐВӐ СӖВЕМӖ

Зоя СЫВЛӐМПИ

### Тӑван кӗтес

Ҫут ӑраскал мӗнне пӗлетӗп эпӗ:
Вӑл – сар хӗвел ачашшӑн йӑл кулни,
Мухтавлӑ тӑван халӑхӑн хисепӗ,
Чунпа ялан ҫак халӑхпа пулни!

Ҫуралнӑ ен! Манми Тӑван ҫӗршывӑм!
Санпа пӗр ӗмӗт-шухӑш ман, пӗр ҫул.
Эппин, пулсам хӑватлӑ, ырӑ, сывӑ,
Нихҫан ан сӳнтӗр саншӑн ӑнӑҫу!

Санпа кӑна ман пурнӑҫӑм хавхаллӑ,
Чи сиплӗ сывлӑш маншӑн эс, ӗнен.
Пулни-иртни те маншӑн – тӑван халӑх,
Телейлӗ пуласси те – Чӑваш ен!

### Чӑваш Ен

Ытарайми кӗтесӗм, Чӑваш Ен!
Сана саватӑп эпӗ чӗререн!
Епле илемлӗ савнӑ вырӑнсем,
Юханшывсем те шавлӑ вӑрмансем!

*Хушса юрламалли:*

Кунсерен эс пырсам ҫӗнелсе,
Малалла ӑнтӑлса, ҫӗкленсе.
Санпа ҫеҫ манӑн пурнӑҫ чечен,
Илӗртӳллӗ манми Чӑваш ен!

Уйра ҫӳл тӳпере юрлан тӑрин
Калама ҫук хаваслӑ-ҫке юрри!
Чуна ҫӗклеҫҫӗ шӑпчӑк сассисем,
Чӑвашлӑхпа ҫеҫ тулнӑ пуль вӗсем...

*Хушса юрламалли.*

Тӑван кӗтесӗм! Савнӑ Чӑваш ен!
Эс – ҫутӑ ӑраскалӑм ман – ӗнен.
Ӑҫта кайсан та – ҫук санран хакли.
Эс маншӑн чӑн та – пуринчен чапли!

*Хушса юрламалли.*

### Акатуй

Ҫакӑ кун сенкер тӳпе те аслӑ,
Иртенпех хӗвел савӑнтарать.
Янӑрать хавха кӳрсе хаваслӑн
Акатуй уявӗ таврара!

Ҫӗкленӳллӗ кӑмӑл ҫӗр ӗҫченӗн.
Савӑнмашкӑн ун сӑлтавӗ пур:
Уй-хирте ака-суха вӗҫленнӗ.
Эх! Ентешӗсем епле маттур!

Ӗҫлеме, канма пӗлет ял-йышӑм,
Пултаруллӑ – ташӑ-юрӑра.
Кашнинех кӗтсе илет-ҫке ӑшшӑн.
Туслӑхра – кун-ҫул та ҫутӑрах!

Ҫакӑ кун сенкер тӳпе те аслӑ,
Иртенпех хӗвел савӑнтарать.
Янӑрать хавха кӳрсе хаваслӑн
Акатуй уявӗ таврара!

### Ӗҫ ҫыннине

Хисеплӗ ӗҫ ҫынни! Мухтав сана!
Ялта-и пурӑнатӑн, хулара-и,
Паратӑн ӗҫшӗн эс мӗнпур вӑйна –
Тӗреклӗ ҫын епле ахаль ларайӗ?

Хастарлӑху вара – ҫӗклет чуна!
Санпа камах-ши танлашма пултарӗ?
Тӑватӑн ҫитӗнӳ кунран-кунах –
Ахаль юхмасть чӑн-чӑн ӗҫченӗн тарӗ.

Пӗрмай ӗҫре. Чӑтӑмлӑху мӗн чуль!
Ялан ҫӳлте маттур ентешӗн ячӗ!
Акатӑн тырӑ е саратӑн ҫул,
Ҫакна пӗлсем: санра – Ҫӗршыв хӑвачӗ!

# Алла “пылчăкра” пурăнасшăн мар



**Паллă телеертӳçĕ, шӳт ăсти Максим Галкин хĕрĕх çул тултарнă. Унăн пурнăçĕ йăлт тĕкĕр çинчи пек темелле – пурте веçех пĕлеççĕ. Александр Галкин генерал-полковник тата наука аслă сотрудникĕ Наталья Галкина çемйинче çуралнă. Паллă ытти çынна евĕрлес пултарулăхĕ шкултах уçăмланнă. Максима çакă хăйне те питĕ килĕшнĕ.**

**Çав вăхăтрах Галкин-кĕçĕнни сцена çине тухмасса та пултарнă вĕт – вăл театр училищине мар, РГГУ лингвистика факультетне суйласа илнĕ. Анчах шăпан – хăйĕн çулĕ. Шăпах гуманитари институтне пула Максим МГУ студентсен театрне лекнĕ, унăн пултарулăхĕ туллин шăпах унта уçăлнă та.**

**2001 çулта эстрада паллă артисчĕ Геннадий Хазанов пултарулăх çулĕпе тин утма пуçланă пародиста асăрхаса хăй патне чĕнсе илнĕ – ятарлă программа хатĕрлемешкĕн. Каярахпа Максим Галкин “Славянский базар в Витебске” фестивале хутшăннă та туххăмрах... чапа тухнă. Çакăн хыççăнах ăна Пĕрремĕш канала “Кто хочет стать миллионером” кăларăма ертсе пымашкăн чĕннĕ. Телекурава пула Галкин Раççей шайĕнчи мега-çăлтăра çаврăннă.**

**Максим Галкин юбилейĕ тĕлне унăн пурнăçĕнчи уйрăмах паллă хăш-пĕр самантa аса илес килет.**

### Оборона министрне Ельцин сассипе калаçса хăратнă

Пултарулăхне шкул сакки çинчех аталантарма пуçланă арçын ача вĕренӳ çуртĕнче иртекен пур спектакле те хутшăннă – Остап Бендертан пуçласа Соломон патша таранах калăпланă вăл рольсем. Анчах та чи кăсăклă рольсем шкул директорĕпе, завучпа, вĕрентекенсемпе çыхăннă – Максим вĕсене евĕрлеме юратнă. Шкул ачи хăйне сцена çинче вĕсем пек тыткаланă, çакăн йышши кашни номере куракан тăваллăн алă çупса йышăннă.



Ашшĕ-амăшĕ ывăлне çапла путишленме чарман, пушшех тепĕр май, унăн пултарулăхне аталантарма тăрăшнă. Вĕсен пулăшăвне туйса арçын ача малалла та ыттисене тата тăрăшарах евĕрленĕ. Çапах та шкул хыççăн Максим Галкин театр институтне суйласа илмен. Çакна хăй вĕсен çемйинче артист профессине картсах кайманнипе ăнлантарать.

“Студентсен театрне вара эпĕ ăнсăртран лекрĕм, – каласа кăтартать Максим. – Хам вĕренекен университетра пĕлтерӳ куртăм. Ку вара – ăнăçу. Сезона хупнă май театр ячĕпе сцена çине шăпах эпĕ тухни те ăнăçу мар-и вара?”

Максим хăй паллă çынсене евĕрленине аса илет. Çитменнине, вĕсем питех те ăнăçлă пулса тухнă. Оборона министрĕ Павел Грачев та çакланнă çак капкăна.

“Пĕррехинче манăн ăна хамăн пултарулăхпа паллаштарас килсе кайрĕ, – йăл кулать Галкин. – Атте вăл вăхăталла генерал-полковника çитнĕччĕ ĕнтĕ. Эпир Грачевсен Сочири дачинче хăналанаттăмăр. Ельцинăн Сочири резиденцийĕ те инçех марччĕ. Вăл çывăх вăхăтрах унта килме пултарасси паллăччĕ. Павел Сергеевич тăвансемпе пахчара уçăлса çӳренĕ чухне шăппăн кăна вĕсен хыçне пытăм та Борис Ельцин сассипе сывлăх сунтăм. Çак самантра Грачевăн сăн-питне курасчĕ сирĕн!”

Нумай çул иртсен Галкин-кĕçĕнни унăн пултарулăхĕнче çапах та çемье пысăк вырăн йышăннине палăртать.

“Атте-анне енчен ăннă мана. Çывăх çак çынсене суйламаççĕ вĕт. Вĕсем вара питĕ лайăх çынсем, апла, мана ăннă. Эпĕ юратура çитĕннĕ, ку вара питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эпĕ пултаруллă нумай çынна пĕлетĕп. Вĕсен карьери пĕртен-пĕр сăлтавпа ăнăçман – çынна юратманнипе, кăмăлĕсем усаллипе. Çакă телейсĕр ачалăхпа е хăйсен çемйинчи кăткăс хутшăнусемпе çыхăнма пултарнă. Телейлĕ ачалăх – хăйне майлă вăйлă аккумулятор, вăл мана халĕ те малалла утма хавхалантарса пырать”, – каласа кăтартать шӳт ăсти.

### “Тус” кăна

МИХсенче нумай çул тĕрлĕ сас-хура явăнчĕ – паллă телеертӳçĕ е пĕр чиперккепе çыхланса кайнă, е тата теприн чĕрине çунтарать. Максим хăй çак сас-хурана сире-сире ывăнса çитнĕ ун чухне. Çук, никам та унăн чун-чĕрине тыткăна илеймен-ха. Хăйĕнчен 27 çул аслăрах Алла Борисовна-и? Вĕсен хушшинче туслăх туйăмĕ кăна. Унран ытла нимĕн те çук.

2000 çулсенче телеертӳçĕ панă малтанхи интервьюсенчен çакă паллă. Çапла, унăн та хĕрарăм идеалĕ пур. Анчах та çав идеалăн пĕр çитменлĕхсĕр чиперук пулмалла мар. “Стандарт шайĕнчи илем мана нимĕн чухлĕ те илĕртмест, – каласа кăтартнă Максим. – Унта астараканни нимĕн те çук. Мана мĕнпе те пулин илĕртме пултаракан çынсем килĕшеççĕ, хăйне май шарм пултăр вĕсен. Анне аппăшĕ вăрçса вĕлерет мана. “Эсĕ нихăçан та авланаймастăн пулĕ ĕнтĕ, – тет. – Аслаçупа асаннӳн, аçупа аннӳн идеал шайĕнчи хутшăнăвне сăнасакурса хăв та çав шайри хĕрарăма шыратăн ĕнтĕ”. Эпĕ, чăн та, ырă çемьери ырă хутшăнусенче ӳссе “пăсăлнă” çын”.

Анчах та 2009 çултах Алла Борисовна та хăйне Максим Галкинпа туслă çыхăнусем кăна пĕрлештерсе тăманнине каланă. Примадонна йышăннă тăрăх, вĕсен хушшинче туслăхран вăйлăрах туйăм 2001 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнчех вăй илнĕ. Хĕрарăм шухăшĕпе, шăпах çавăнтан пуçланать Пугачевăпа Галкинăн юрату историйĕ. Сăмах май, Алла Борисовна ун чухне ирĕклĕ пулман-ха: вăл Филипп Киркоров юрăçпа арлă-арăмлă пурăннă. 2005 çулта çемье арканнă. Çав вăхăтран пуçланса Максим Галкин çумне Примадоннăн çамрăк фаворичĕн тата çемье аркатакан статусĕ çыпăçнă.

Анчах та Галкин çакна чунтан хирĕçлет. Çук, Раççей мега-çăлтăрĕсене вăл уйăрман. “Мĕнех, фаворит рольне çыпăçтарччăр ман çума, пурпĕрех эпĕ çак сăнарта туймастăп хама. Пушшех те, Аллăпа Филипп уйрăлăвĕн сăлтавĕ пачах та – эпĕ мар. Вĕсем уйрăлни çинчен те эпĕ каярахпа кăна пĕлтĕм. Чăн та, ыттисенчен маларах. Халĕ Пугачевăпа иксĕмĕре савăшуллă хутшăнусем çыхăнтарса тăни пирки калаçма пуçлаççĕ ĕнтĕ. Вăл текех никамăн арăмĕ те марри, ирĕклĕ хĕрарăм пулни пирки сăмах тĕкме тытăнĕç”, – тенĕ Галкин.

Максимпа Алла, хут уйăрттармасăр пурăнаканскерсем, пирки чăн та мĕн тĕрлĕ сас-хура çӳремен-тĕр çав вăхăтра. “Пирĕн пурте йĕркеллех, – ăнлантарса ывăннă, çапах та мăшăрĕ çинчен ăшшăн калаçнă Пугачева. – Лăпкă, тикĕс, хаваслă, нимĕнле кăткăслăх та çук. Пазлсем пĕрлешрĕç тейĕн... Хам пурнăçра пĕрремĕш хут мăшăра нихăш енпе те пулăшмалла мар манăн. Эпĕ унăн пурнăçне пачах та сĕкĕнместĕп. Тĕрĕссипе, вăл хăй те кĕртмест мана унта. Тĕрĕс тăвать тесе шухăшлатăп. Эпĕ унăн пултарулăхĕнче нимĕн те ăнкармастăп. Шухăшлама та, ăнланма та пултараймастăп – çынсене çавăн чухлĕ вăхăт мĕнле култарма пулать-ха?”

2011 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче Аллăпа Максим вăрттăн пĕрлешнĕ. Тепĕр кунне вара çакна хăна пуçтарсах паллă тунă. Туй кĕрекине чи çывăх çынсене кăна чĕннĕ, апла пулин те 50-ăн пуçтараннă. Çĕнĕ хыпар нумайăшĕшĕн уяр çанталăкра аça çапнăнах туйăннă. “Паллах, Галкин – манăн юлашки упăшка”, – тенĕ çав кас Пугачева. Маларах вара вăл ЗАГСа тăватă хутчен çитнĕ. “Маншăн та ку юлашки мăшăрлану пуласса шанатăп”, – пĕлтерме васканă çамрăк упăшка.

2013 çулхи авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче суррогатлă амăшĕн пулăшăвĕпе усă курса çемьере йыш хушăннă – Елизавета тата Гарри йĕкĕрешсем килнĕ çут тĕнчене. “Ывăлăмăн ячĕ Гарри Потерпа тата Гарри принцпа пĕр килни мана килĕшет, – палăртнă Максим. – Анчах та эпир хитре ятсем шырарăмăр ачасем валли – çавă кăна”.

### Ачалăхри ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ

Туй хыççăн Алла Борисовна хула тулашĕнчи хăйĕн çуртĕнчен – вăл Истра хĕрринчи Малые Бережки ялĕнче вырнаçнă – упăшкин килне пурăнма куçнă. Галкин Мускавран инçех мар Грязь ялĕнче ултă хутлă çурт çĕкленĕ. Экспертсем палăртнă тăрăх, унăн хакĕ 40 миллион европа танлашать.

Вырăнти çынсем çак çурта шӳтлесе “Галкин йăви” е “Дракула граф керменĕ” теççĕ. Чаплă кермене 2006 çулта çĕклеме пуçланă. Ĕçсем пилĕк çула яхăн тăсăлнă. Сас-хурана ĕненес тĕк, Грязь ялĕ Галкина çын алли пырса перĕннипе улшăнман тавралăхпа, çул-йĕр шăв-шавĕнчен аякра пулнипе кăна мар, унта çĕр хакĕ пĕчĕккипе те илĕртнĕ.

Чаплă кермен пĕр гектара яхăн çĕр çинче вырнаçнă. Кунта строительство ĕçĕсем пуçлансанах вырăнти халăх ун çинчен кăна калаçнă. Хуçасем тата вĕсен хăнисем валли çуртра 20 ытла пӳлĕм уйăрнă. Унсăр пуçне спорт комплексĕ, бассейн, хĕллехи сад, килти кинотеатр тата... обсерватори пур!

Сăмах май, темиçе хутчен качча тухнă пулин те Галкинччен Алла Пугачева пĕр упăшки патне те пурăнма куçман. Примадоннăна ял ячĕ кăна килĕшмест. “Улăштарас пулать ку ята, пылчăкра пурăнас килмест манăн”, – тенĕ вăл пĕррехинче юлташĕсене.

Юбиляр вара хăйĕн çурчĕпе питĕ кăмăллă. Питĕ пысăк кермен пирки хăй мĕн ачаранпах ĕмĕтленнине пытармасть Максим Галкин.

**/«7 Дней»/.**

**Хаклă вулакансем!**

Çырăнтару вĕçлениччен шутлă кунсем юлчĕç. Почтальонпа тĕл пулма, «Хыпарпа» унăн кăларăмĕсене çырăнса илме васкăр. II çур çулта илсе тăмашкăн **«Хыпара» – 736,02** тенкĕпе, **«Хыпар – эрнекуна» 338,34** тенкĕпе çырăнтараççĕ. **«Чăваш хĕрарăмĕ» – 354,42** тенкĕ.

*Пирĕн кăларăмсене «Советская Чувашия» киоскĕсенче те çырăнма май пур.*

**Аса илтеретпĕр:** «Хыпар» II çур çулта эрнере 3 хутчен тухать.

Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсем республикăри районсемпе хуласенчи «Чăваш пичечĕ» киосксенче сутлăхра пулмĕç.

Пирĕн кăларăмсене – «Хыпар», «Хыпар-эрнекун», «Çамрăксен хаçачĕ», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Хресчен сасси», «Тантăш», «Сывлăх», «Кил-çурт, хушма хуçалăх» хаçатсене, «Тăван Атăл», «Капкăн», «Самант», «Тетте» журналсене – малашне çывăхри почта уйрăмĕсенче, Шупашкарта «Советская Чувашия» киосксенче тата редакцие килсе /адресĕ: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 318-мĕш пӳлĕм/ туянма пултаратăр.

**«Хыпар» Издательство çурчĕ.**

## ЛĚП-ЛЕП




● "АЛИКОВО"СЕМ РЕСПУБЛИКА КУННЕ ЭЛĚКРЕ ИРТТЕРМЕ ТĂРĂШСАХ ХАТĚРЛЕННĚ КУРĂНАТЬ...

### И-ХИ-ХИК

Упăшкине пулă тытма ăсатнă май арăмĕ ăса вĕрентет:

– Так, ас ту: çыртмаллине тата пулла улталамаллине ан арпаштар, хăвăн телефон номерне пĕр çăрттана та ан пар, арăмна ан мухта, шашлăка çунтарса ан яр, мунчара пиçсе ан кай. Чи кирли – ман пата ан шăнкăравла! Эпĕ хĕрсемпе сунара каятăп.

* * *

Аэропортра хĕрарăм упăшкине сĕтĕрсе пырать.

– Хăçан ĕçсе тăранатăн-ши эсĕ?! – тарăхать хайхискер. – Киле мĕнле илсе çитерес манăн халĕ сана?

– Эпир ăçта вара? – пуçне çĕклет арçын.

– Аэропортра.

– Мĕн тăватпăр эпир кунта?

– Мĕн тăватпăр-мĕн тăватпăр? Египетран таврăнатпăр!

– Ан калаç! Мĕнле вара унта – Египетра?

* * *

– Миллион çавăрттарас килет...

– Апла санăн инкассатора вырнаçмалла та машинуна ўпĕнтермелле.

* * *

Ылтăн пулă тытрăм. Ăна хамăн ĕмĕтсем çинчен каласа кăтартрăм. Вăл ассăн сывларĕ те:

– Атя, ăшала, – терĕ.

* * *

– Юрка больницăна çакланнине пĕлетĕн-и?

– Мĕн пулнă тата? Ĕнер кăна машинине хитре пике лартса кăмăллăн ярăнтаратчĕ-çке?

– Çакна арăмĕ те курнă çав...

* * *

– Эсĕ мĕскер, ачасене воспитани памалли çинчен кĕнеке вулатăн-и?

– Аха, мана аттепе анне ытла та çирĕп тытмаççĕ-ши тесе тĕрĕслетĕп-ха.

* * *

– Санăн упăшку туртать-и?

– Çапла, савăшнă хыççăн.

– Анчах та сывлăхшăн начарçке ку...

– Эй, çулталăкра икĕ-виçĕ сигаретшăнах нимĕн те пулмастьтĕр...

– Эсĕ манăн пуринчен те лайăххи тесе каларăм-и-ха эпĕ сана?

– Çук, пĕрремĕш илтетĕп.

– Вăт япала! Ĕнер ку сăмахсене кама каларăм вара эпĕ?

* * *

– Килти телефона сўнтерер пуль – унпа пурпĕрех никам та усă курмасть.

– Эсĕ усă курманни ниме те пĕлтермест! Эсĕ кунĕпех ĕçре вĕт. Эпĕ вара унпа шăнкăравласа хамăн кĕсье телефонне шыраса тупатăп.

* * *

Пĕчĕк хĕрача хваттерте çĕр çĕмĕрет. Çўлĕк çинчи кĕнекесене урайне шăлса ывăтать, шкапри япаласене сапалать, сĕтел-пукана çавăра-çавăра çапать... Пўлĕме амăшĕ вирхĕнсе кĕрет.

– Мĕн пулнă?!

– Нимĕн те... Вылятăп...

– Мĕнле вылятăн?

– ... – усал сăмах лачлаттарса хурать хĕр пĕрчи. – "Машина çăраççи ăçта кайса кĕнĕ?!" ятлине...

* * *

Машина çĕмĕрĕлчĕ. Сервиса кайрăм. Юсанăшăн 25 пин тенкĕ тўлемеллине каларĕç. Пурпĕрех нимĕнле гаранти те çук иккен. Гаражсене кайрăм. Икĕ сехетре юсарĕç, пĕр кĕленче ыйтрĕç, халĕ манăн машинăпа çĕр-çĕр километр чупма май пуррине каларĕç.

Ыран поликлиникăна пуçтарăннăччĕ. Ахăртнех, гаражсене кайсан аванрах...

* * *

Хунямăшĕ кинĕ патне шăнкăравлать:

– Манăн ывăл мĕнле пурăнать унта?

– Мĕнле-мĕнле?.. Ĕçет, чупать, мана хĕнет...

– Тавах Турра! Ан чирлетĕр кăна...

* * *

Африкăран килнĕ студент:

– Чутах шăнса вилеттĕм – урамра вăтăр градус сивĕ!

– Ыран çур хула вакра чăмпăлтатассине пĕлет-и вăл? – илтĕнет хыçалти ретрен сасă.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. **Песок,** ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Работаем** без выходных. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** пустотелые 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40; полнотелые 20х20х40 – заводские; **ЦЕМЕНТ** – недорого. Кассовый чек. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, кирп. бой, чернозем, навоз. Дешево. Доставка. Т.: 89033581770, 89276689713.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.ГРАВМАССУ,** песок, **щебень, керамзит,** кирп. бой, чернозем. **Дешево.** Доставка. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**13.Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича. Д-ка. Т. 89033225766.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой, керамблоки, **кольца. Бурение.** Т. 89613393363.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 89053465671.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича, керамзит. Доставка. Т. 8-906-135-52-41.

**24.Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**27.КИРПИЧ** рядовой, облицовочный, **блоки керамзитобетонные.** Доставка. Т.8-903-322-02-08.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**41.БЕТОН всех марок** – для фундамента. Т. 89613400295.

**58.** Сетку-рабицу, заборы, **ворота** (кованые, распашные, гаражные), ДВЕРИ железные, **ОКНА** пластиковые. Кровля и обшивка домов. Козырьки, навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru

**61.Заборы, навесы, беседки, ворота,** решетки. Т. 8-987-737-29-39.

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**104.ТЕПЛИЦЫ по низким ценам.** Доставка. Сборка. Т. 48-16-54.

**129.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната.** Д-ка. Скидки. Т. 89276676202.

**142.Окна – дёшево.** Т. 89276684382.

**158.ПРИЦЕП трактора, мотоблока.** Т. 8-905-344-47-35.

**165.Бетон,** раствор. Д-ка. **Скидки.** Без выходных. Т. 89677906116.

**176.Гравмассу, песок, навоз** и т.д. Работаем – пн.-сбб. Доставка. Низкие цены. Т. 89278502821.

**203.Песок, щебень, гравмассу.** Доставка. Скидки. Т. 8-987-667-97-56.

**214.Керамблоки** /40х20х20, 40х12х20, 40х9х20/ **пропаренные, вибропрессованные.** Недорого. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**223.ОКНА, теплицы,** обшивка домов. **Двери** стальные. Гарантия 15 л. Скидки 40%. Т. 89196624097.

**235.** Тротуарные **ПЛИТЫ, брусчатку,** экопарковку, песок, щебень, **гравмассу,** цемент. Доставка. Укладка. Скидки. Т. 89033220479.

**237.** Профнастил, металлочерепицу, **сайдинг,** водостоки, утеплители. Скидки. **Доставка.** Монтаж. Замер. Т. 8-903-322-04-79.

**273.Бетон, песок, гравмассу.** Доставка. Т. 8-960-306-32-54.

**305.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **к/б блоки,** торф, бой кирпича, бетона. Т. 89093005705.

**311.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича. **Д-ка.** Т. 89050282225.

**384.** Пластиковые **ОКНА,** натяжные **ПОТОЛКИ,** металлические **ДВЕРИ.** Рассрочка. Скидки. Работаем без предоплаты, оплата в день установки. Выезд на замер и доставка по Чувашии – бесплатно. Т. 89276683136.

**395.Асфальтную крошку,** гравмассу, **песок** карьерный и речной, щебень, керамзит, **бетон,** раствор. Недорого. Т. 89613409305.

**450.БЕТОН, РАСТВОР всех марок.** Т. 8-960-306-32-54.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев, скважин.** Дост-м предметы. Т. 8-967-471-50-70.

**43.Бурение скважин** "под ключ". Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8(8352) 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**77.Натяжные потолки** за 1 день, **ПЛОТНИЦКИЕ РАБОТЫ.** Т. 8-937-397-24-42.

**125.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-906-381-60-37.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**213.Бурение скважин на воду.** Т.: 8-962-321-17-80, 21-17-80.

**236.Кровельные, фасадные работы.** Установка забора. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**421.Пенсионные споры,** обжалование решений в суде. Т. 372874.

**444.Бригада** "Садовый товарищ" **выполнит** все виды строительных работ **качественно и недорого.** Т. 8-927-866-86-56.

### ĔÇ/РАБОТА

**376.Приглашаем подсобников, маляров** /бригады маляров/ для работ на муниципальной отделке в Москве и Московской области. Опыт работы не обязателен /обучение на производстве/. Контактный телефон 8-963-770-99-62, Алексей.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Эпĕ 39 çулта. Ял пурнăçне килĕштерекен ырă кăмăллă хĕрпе е хĕрарăмпа паллашса çемье çавăрасшăн. Манăн тел. 8-953-018-47-22, шăнкăравлăр.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 24.06.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 издательство директорĕ.
Тираж 7872. Заказ 2184.